25-мĕш ӳнĕ тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
10
ЮНКУН
197 (6948) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Сăмах патăн пулсан— ăна пурнăçа кĕрт!

Кубань колхозникĕсем чĕнсе калаçă тăрăх Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртава хутшăнса, республикăри ĕçсыннисем кăçал государствăна тыр памалли плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç. Çак обязательствăна пурнăçа кĕртесси— республикăри партипе совет тата комсомол организацийĕсен, республикăри пĕтĕм ĕçсыннисен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать. Халĕ пирĕн умра çак задачăран пысăкрах та чысларах ĕç урăх çук, мĕншĕн тесен государствăна тыр памалли плана вăхăтра та пĕтĕмĕшпех тултарни пирĕн çĕршывăн вăй-хăватне ӳстерет, вăрçă вăхăтĕнче арканнă хуçалăха юсама, ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатса пыма пулăшать.

Ахальтен мар ĕнтĕ ВКП(б) Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XXIII-мĕш пленумĕ «Государствăна тыр памалли плана срокчен тултарас тата ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе республика хăй илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен» ятарласа ыйту лартса сӳтсе-явăрĕ.

Республикăри нумай колхозсем государствăна тыр парас тĕлĕшпе хăйсем илнĕ обязательствăна чыслăн тултарчĕç, ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те вăхăтра туса ирттерчĕç. Вăрнар районĕ, илнĕ обязательствăна октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртсе, государствăна тыр пĕтĕмлетсе, районри колхозсем нумайĕшĕ халĕ планран ирттерсе тыр парассĕç. Çак районри малта пыракан колхозсен руководителĕсем, партин пуçламĕш организацийĕсем тырпул хатĕрлемелли плана тултарассишĕн тыр вырма пуçланă малтанхи кунсенчех кĕрешме тытăнчĕç, çанталăк начар тăнă пулин те, чĕрĕ тырра типĕтес, ăна вăхăтра тасатса, хатĕрлев пунктне турттарас ĕçе организацилеме пултарчĕç, çапла вара хăйсене панă графика çирĕп пурнăçа кĕртсе пычĕç.

Государствăна тыр парас тĕлĕшпе Советски, Сĕнтĕр тата ытти районсенчи колхозсем те начар мар ĕçлессĕ. Вăл районсем тыр хатĕрлемелли плана октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне 82 процент ытла тултарнă. Государствăна тыр парас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăна çак районсенчи колхозсем те вăхăтра тултарасса çирĕплĕнех шанса тăма пулать.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, республика хăй илнĕ обязательствăсене çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пырать-ха. Пирĕн республика кăçал государствăна тыр парас енĕпе пĕлтĕрхинчен чылай юлса пырать. Нумай районсенчи партипе совет организацийĕсем государствăна тыр парас ĕçе татăклăнах хăвăртлатас тата хăйсене панă графика çирĕппĕн ĕçе кĕртсе пырас тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Çавна пула октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне республика тыр хатĕрлемелли плана пĕтĕмпе те 70 процент кăна тултарчĕ, тепĕр майлă каласан, государствăна пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне панинчен темиçе пин тонна сахалтарах тыр пачĕ. Чылай районсем кăçал тырпул хатĕрлес тĕлĕшпе пĕлтĕрхинчен начартарах ĕçлессĕ. Вăл районсен шутне Элĕк, Калинино, Шупашкар, Çĕрпӳ районĕсене те кĕртме пулать. Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Улатăр, Чкаловски, Комсомольски тата Канаш районĕсем вара уйрăмăнах тӳсме çук начар ĕçлессĕ. Çак районсен руководителĕсем—парти райкомĕсен секретарĕсемпе райисполкомсен председателĕсем—хатĕрлев ĕçне хирĕç тăракан шухăшкăмăлсемпе тивĕçлипе кĕрешмессĕ, государствăна тыр памасăр тăракансене, тырра колхозăн тĕрлĕ пушшисем валли салатса пĕтерекенсене курмассĕ. Çавна пула хăйсене панă пилĕккунлăх заданисене тăтăшах пурнăçа кĕртсе пымассĕ.

Юлса пыракан колхозсен, çавăн пекех районсен руководителĕсем те хăйсем начар ĕçленине ăнлантарса памалли тĕрлĕ сăлтавсем шыраса ларассĕ. Вĕсенчен хăшĕпĕрисем: «Аван çапаймарăмăр-ха, государствăна пама çапнă тыр çук», теççĕ, çав вăхăтрах аван çапас ĕçе хăвăртлатас тесе нимĕн те тумассĕ. Теприсем тата: «Çынсемпе туртăм вăйĕ çитеймерĕ-ха, çавăнпа тыр леçеймерĕмĕр», теççĕ, çапла вара хăйсене такам килсе пулăшасса кĕтсе ларассĕ, хăйсен пĕтĕм вăйĕпе майĕсене мобилизацилеме тăрăшмассĕ. «Тыр чĕрĕ, хатĕрлев пункчĕ йышăнмасть», тесе каласакан юлташсем те пур-ха. Çаксем вĕсем пурте сăлтав мар, сӳпĕлтетӳ кăна пулса тăрассĕ. Государствăна тыр вăхăтра парса татас тесе тăрăшакан руководитель çавăн пек каласма пултараймасть. Пирĕн çĕршыв хăватлă пултăр тесен, пирĕн ĕççыпиннисен пурнăçĕ юсанса пытăр тесен, государствăна тыр памалли плана пирĕн кирек мĕнле йывăрлăхсем пулсан та, кирек мĕнле çанталăкра та пурпĕрех тата вăхăтра тултармалла. Государствăна пушă сăмах çапни мар, тыра кирле, мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе, çĕршывăн боевой заданине вăхăтра пурнăçа кĕртни кирлĕ. Çакăн пек кăна шухăшлама пултарать колхоз е район руководителĕ, вал чăн-чăн большевик пулса тăрать пулсан.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çакна палăртса хăварчĕ: республикăри чылай районсем ялхуçалăх ĕçĕсенче, государствăна тыр парас ĕçре юлса пынин тĕп салтавĕ—парти райкомĕсем партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсене начар ертсе пыни, колхозсемпе МТС-сенче массăллă-политикăллă ĕçе çителĕксĕр йĕркелени пулса тăрать, терĕ. Пĕр тĕслĕх кăна илетпĕр. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсенче 25 пуçламăш парторганизаци шутланать. Çакă ĕнтĕ пысăк вăй пулса тăрать. Анчах çапах та Хĕрлĕ Чутай районĕ государствăна тыр парас тĕлĕшпе республикăра 29-мĕш вырăна йышăнать, ку енĕпе çав тери начар ĕçлет, мĕншĕн тесен парти райкомĕ çак пысăк вăя мобилизацилеме пултарайман, ăна тивĕçлипе ертсе пыман. Кунта массăллă-политикăллă ĕç те çителĕксĕр пулса пырать.

Государствăна тыр парас тĕлĕшпе хамăр йышăннă срок çитиччен—ноябрĕн 1-мĕшĕччен—вăхăт нумай юлмарĕ. Обязательство илтĕмĕр пулсан, ăна пурнăçа кĕртес пулать. Пирĕн сăмах ĕçрен уйăрăлса ан тăтăр тесен, хамăр илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртес тесен, республикăри партипе совет организацийĕсен государствăна тыр парас тата ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе халĕ пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, хăвăртлăхсене икĕ хут, виçĕ хут ӳстермелле. Çакна юлса пыракан районсен руководителĕсен уйрăмăнах асра тытмалла. Кашни районпа кашни колхоз государствăна тыр памалли плана пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ. Çавăнпа та вĕсен государствăна тыр памасăр пĕр кун та сиктермелле мар. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен, уйрăм колхозсем тыр хатĕрлес ĕçре мĕншĕн юлса пынине тĕпчесе пĕлсе, вĕсене илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртме вăхăтра пулăшмалла. Хатĕрлев ĕçне чăрмантарса пыракан, колхоз тырринне унта-кунта салатса пĕтерекен уйрăм колхоз руководителесене çирĕп ответ тыттармалла.

Государствăна тыр парассин ăнăçлăхĕ аван çапассине вăйлатса пынинчен пуçламай килет. Çавăнпа та халĕ МТС-сен комбайнĕсемпе молотилкисем тата колхозсен аван çапмалли машинисем кунĕнçĕрĕн пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле, çунпа пĕрлех тырра алăпа çапассине те анлăн организацилемелле. Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе халĕ пыракан уйăхлăха хутшăнса, кашни колхозăн ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне аван çапса пĕтермелле.

Чылай районсенче ялхуçалăх ĕçĕсене черетлĕн туса пырас йăлана халĕ те пĕтермен-ха. Çавна пула çĕрулмипе пахчасимĕçсене тата техникăллă культурăсене пухса кĕртсе государствăна парас ĕç вăраха юлса пырать. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çак сиенлĕ йăлана сивлерĕ, çĕрулмипе пахчасимĕçсене тата кантăрпа йĕтĕне пухса илес тата вĕсене государствăна памалли плана вăхăтра тултарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ.

Республика кĕрхи çĕртме тумалли плана октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртме сăмах пачĕ. Тӳрех калас пулать, çак ĕç халĕ калама çук çителĕксĕр пулса пырать. Нумай районсем кĕрхи çĕртме тумалли плана çурринче те тултарайман-ха, çак шута малта пыракан Вăрнар районĕ те кĕрет. Кĕрхи çĕртме килес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсĕ пулса тăнине асра тытса, халĕ пирĕн çак ĕç валли туртăм вăйĕ те, çынсем те çителĕклĕ таранах уйăрса памалла, çĕртме тумалли плана мĕнле пулсан та пĕтĕмĕшпех тултарма тăрăшмалла.

Парти Обкомĕн пленумĕ хăй йышăннă решенире тĕплĕ кăтартусем парса хăварчĕ. Çав кăтартусене пурнăçа кĕртесси— районсенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсен паянхи чи пысăк задачи пулса тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлес тата государствăна тыр парса татас тесе, халĕ вĕсен массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатса пымалла, хамăран Тăван çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕçлĕх çинчен ĕççыпиннисене ăнлантарса памалла, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва организацилесе вăйлатса пымалла.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тыр, çĕрулми, пахчасимĕç парса татмалли тата аван çапса пĕтермелли уйăх

Уйăхлăх задачисене пурнăçлассишĕн

КАЛИНИНО, октябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна тыр памалли плана 75 процента яхăн тултарнă. Малта пыракан 14 колхоз государствăна обязательство тăрăх тыр, çĕрулми, пахчасимĕç памалли плансене те тултарчĕç. Колхозсенчен пĕтĕрнĕ тăрăх, колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 24.000 пăт ытла тыр пама йышăннă. Государство обязательствине тултарнă колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне тыр пама тытăнчĕç. «Путь Ленина» колхоз 900 пăт, «Правда» колхоз 480 пăт, «Строитель» колхоз 300 пăт, «Социализм» колхоз 360 пăт, «Первое мая» колхоз 600 пăт Заготзерно пунктне леçсе панă та ĕнтĕ.

Районри колхозсем паян-ыран капан хывса пĕтереççĕ. Аван çапса пĕтернĕ колхозсен шучĕ те кулленех йышлăланса пырать. Паянхи кун тĕлне 8 колхоз аван çапса пĕтернĕ. Услапари «Броневик» колхоз ялхуçалăх ĕçне вĕçлерĕ. Çак кунсенчех кĕрхи çĕртме те туса пĕтерет. Ку колхоз государствăна вылăх-чĕрлĕх продукчĕсем те парса татрĕ. Кунта аван çапнă çĕрте шыв вăйĕпе усă курчĕç. «Красноармеец» колхоз та аван çапса пĕтерчĕ, государствăна тыр, çĕрулми, пахчасимĕç парса татрĕ. Пушкин ячĕпе тăракан колхозра та шыв вăйĕпе усă курассĕ, кунта пĕтĕм тырăсенчен 85 процентне çапнă. «Новый путь» колхозра кунĕн-çĕрĕн аван çапассĕ, çак ĕçе кунта кĕске вăхăтрах туса пĕтереççĕ. Сложнăй молотилкăпа туллин усă курасçĕ, çĕрле ĕçленĕ чухне итеме электричествăпа сутатассĕ.

Район çывăх кунсенчех государствăна тыр, çĕрулмипе пахчасимĕçсем парса татма тивĕç. Çак ĕçе ăнăçлăн пурнăçлама уйăм колхозсем кăна чăрмантарассĕ. Акă, Сталин ячĕпе тăракан колхозах илер. Çак колхоз государствăна тыр парас тĕлĕшпе ытла та юлса пыннине шута илсе, вырăнтах тыр йышăнмалли пункт организацилеремĕр. Анчах та колхоз çакăн хыççăн та, çапнă тыр ситменнине пула, графика тултараймасть. Кунта чăн малтанах аван çапас ĕçе кирлĕ пек организацилеменни чăрмантарать. Колхоз председателĕ Арсентьев юлташ кунĕн-çĕрĕн аван çапассине организацилемен тата ялти пĕтĕм вăя аван çапас ĕçе мобилизацилемен. Колхозра нефтьпе ĕçлекен двигатель те пур, анчах та унпа усă курмассĕ.

Çаван пекех Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра та государствăна тыр парас ĕç ытла та çителĕксĕр пырать. Çак колхозăн итемĕнче 100 центнер ытла çапнă тыр выртать. Колхоз председателĕ Григорьев юлташ, уяр çанталăкпа усă курса, тырра сăвăрас тата сортласа государствăна ăсатас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемест. Çак колхозра партин пуçламăш организацийĕ те пур. Парторганизаци секретарĕ Яманов юлташ агитацийлĕ-массăллă ĕçе колхозниксем хушшинче кирлĕ пек туса пымасть, колхозниксене лайăхрах ĕçлеме мобилизацилессишĕн кĕрешмест.

С. САПЕРКИН.

Государствăна хăвăртрах тыр парса татар

ЕТĔРНЕ. Районри малта пыракан «Дружба» колхоз государствăна тыр памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 110 процент тултарчĕ. Халĕ вĕсем ситес çулшăн тата планпа пăхнинчен ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 50 центнер тыр пачĕç. «Новая сила», «Красный Октябрь», «Восток» колхозсем те государствăна тыр памалли плана тултарса, ситес çулшăн тыр парассĕ. Талуйри Ленин ячĕпе тăракан, «Парижская Коммуна», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те государствăна тыр памалли плана тултарчĕç. Районри пытти колхозсен те çак малта пыракан колхозсем пек ĕçлеме пур майсем те пур. Юлашки вăхăтра çак ĕçе хăвăртлатас майпа Заготзерно пунктĕнчен инçе колхозсем валли Заготзерно пунктне татах тепĕр çĕрте уснă, Сăр шывĕ хĕрринчи колхозсем валли тыр турттарма баржăсем те панă. Государствăна вăхăтра тыр парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлекен колхозсем çак условисемпе лайăх усă курассĕ. «Путь к социализму», «Искра» тата «Красноармеец» колхозсем баржа çине 110 тонна тыр леçсе панă. «Дружба» колхозăн транспорт бригалинче ĕçлекенсем, Заготзерно пунктне хăйсен колхозĕ сывăхнерех уçсан, кунне 3—4-шар хутлана. Туртăм вăйĕ сахалтарах колхозсем ку ĕçре вăкăрсемпе анлăн усă курассĕ.

Анчах чылай колхоз руководителĕсем государствăна тыр парас тĕлĕшпе ответлăха туймасăр ĕçлессĕ, графика нурнăçламассĕ. Тыр парас тĕлĕшпе уйăмăнах Кăкшăм, Елкино, Алексеевка, Засурски, Хăмăркка колхозĕсем юлса пыраççĕ. Кăкшămри Ильич ячĕпе тăракан колхоз государствăна тыр памалли плана çуррине те тултарман. Колхоз председателĕ К. Нарядов государствăна тыр парас ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшман. Çак пысăк колхоз тыр турттарма виçĕ çынран транспорт бригади тунă. Вĕсем те пулин йĕркеллĕ ĕçлемессĕ. Колхоз Заготзерно пунктĕнчен 4—5 çухрăмра кăна ларать пулин те, кунне пĕрре кăна хутлассĕ.

Çак юлса пыракан колхоз руководителĕсем хăйсен ответсăрлăхне, государствăна тыр парас тĕлĕшпе юлса пынине тĕрлĕрен сăлтавсемпе витме тăрăшассĕ. «Çанталăк япăх», «тыр чĕрĕ», «лашасем çитмессĕ», тесе çапнă тырра амбарсенче усрассĕ. Хăмăркkари «Родина» колхоза Етĕрнери спирт завочĕ тыр турттарма лашасем те, машинăсем те парса пулăшать ĕнтĕ, анчах ĕç пĕр вырăнтах тăрать темелле, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен вăйĕпе мар, ытти вăйĕпе кăна ытларах усă курасшăн.

Юлса пыракан колхозсен малтисемпе танлашма пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, районри организацисен юлса пыраканĕсене мала тухма пулăшмалла.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Государствăна тыр парса татнă

Чурачăк районĕнчи Пысăк Чăрăшри «Пучах» колхоз районра чи малтан аван çапса пĕтерчĕ, государствăна тыр парса татрĕ. Çак çитĕнĕве колхоз колхозниксемпе колхозницăсем хавхаланса ĕçленĕ пирки тума пултарчĕ. Ĕçре кашни бригада, кашни колхозник ăмăртса ĕçленĕ, малта пыракансем юлса пыракансене яланах пулăшса пынă. Колхозра массăллă-политикăллă ĕçе лайăх туса пынă: кашни бригадăрах çĕнĕ хыпарсене каласа панă, хаçатсенчи статьясене вуласа панă. Стена хаçачĕ те вăхăтра тухнă, унта колхозри стахановецсемпе стахановкăсем хăйсен ĕçри çитĕнĕвĕсем çинчен, çав çитĕнӳсене мĕнле тума пултарни çинчен каласа панă.

Колхозра 4 бригада. Бригалирта пултарулăх, агротехникăна лайăх пĕлекен çынсем ĕçлессĕ. Кашни ĕçе уйăм сделъщинăпа туса пыраççĕ. Колхозра ĕç дисциплини те лайăх. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче ĕçе тухман е кая юлса тухакансем çинчен çийĕнчех правление пĕлтереççĕ тата тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Ĕçкуйĕсен минимумне мĕнле тултарнине тăтăшах тĕрĕслесе пыраççĕ.

«Пучах» колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене туса пĕтерчĕ. Халĕ кӳршĕри Ленин ячĕпе тăракан колхоза капан хывма тата аван çапма пулăшать.

Колхоз çĕрулми кăларса пĕтерсе государствăна парса татрĕ.

М. ЯКОВЛЕВ.

Кĕрхи çĕртме пахалăхĕшĕн тăрăшмалла

Çĕрпӳ районĕнчи нумай колхозсем кĕрхи çĕртме сухине ăнăçлă туса пыраççĕ. «Балтиец», «Луч», «Ударник», «Правда», «Ĕмĕт» колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарчĕç. Плана çуррине ытла тултарнă колхозсем те нумай.

Анчах та уйăм колхозсенче кĕрхи çĕртме пахалăхĕ сине кирлĕ пек çаврăнса пăхман тĕслĕхсем пур. «Богатырь» райсемхозра кĕрхи çĕртме пахалăхне тĕрĕсленĕ хыççăн ăшăх сухаланине тĕл пултăмăр. Кунта 15 гектар çĕре трактор-па 9—12 сантиметр тарăнăш кăна сухалана. Бригадир Кириллов юлташ çакна пĕлнĕ, анчах та тарăнрах сухалаттарас тесе нимĕн те туман. Çавăнпа та çак лаптăка çĕнĕрен сухалама хушрăмăр. Буденный ячĕпе тăракан колхозра 3-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Евдокимов юлташ) тракторпа 14 гектар сухаланă. Колхоз председателĕ çак лаптăка лайăх тесе йышăннă. Анчах та тĕрĕсленĕ хыççăн Евдокимов бригадинчи трактористсем сухаланă 12 гектарне вăтам, 2 гектарне, унта шăйăксем нумайăшне пула, начар тесе йышăнма тиврĕ. Начар сухаланă 2 гектара çĕнĕрен сухалама хушнă. Çак тĕслĕхсем вĕсем хăшпĕр колхозсенче ĕç хăвăртлăхĕшĕн тăрăшса, ĕçĕн пахалăхне манса хăварни çинчен каласçĕ. Кĕрхи çĕртмене мĕнле пахалăхпа тунине ялхуçалăх специалисчĕсем кашни колхозрах тĕрĕслессĕ. Начар сухаланă çĕр лаптăкĕсене йышăнмаççĕ, çĕнĕрен сухалаттараçĕ. Кĕрхи çĕртмене ячĕшĕн кăна мар, ăна тĕплĕн тума кирлине кашни тракториста сухаçăн пĕлсе тăмалла.

Районри хăшпĕр колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçĕн хăвăртлăхĕ те çителĕксĕр-ха. «Канаш», «Красный пахарь», «Кульмет», Чапаев ячĕпе тăрăкан колхозсем паянхи кун тĕлне те хăйсен планне 20—30 процент кăна тултарнă. Кашни колхоз руководителĕ çĕртме нумайрах тусан, тырă ытларах пулнине ăнланса, çĕртме тăвас ĕçе пур майсемпе те хăвăртлатмалла.

Л. АНИСИМОВ,
Районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Çĕртме тăвас ĕç юлса пырать

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Хамăр корр.). Районри нумай колхозсем аван çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене туса пынине пĕрлех, кĕрхи çĕртме тăвассине те ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. «Молния», Винокуров ячĕпе тăракан колхозсем районра чи малтан çĕртме туса пĕтерчĕç. Маяковский, Водопьянов ячĕсемпе тăракан колхозсем те çĕртме тумалли плана 80 процент тултарнă. Колхозсенче майракаллă шултăра выльăхсемпе те туллин усă курассĕ. Вăкăрсемпе сухалакансем кулленхи ĕç нормине 100—120 процент тултарса ĕçлеççĕ. Çаван пекех Энтри Пасар ял Советĕнчи тата Туппай Ĕсмĕлти «Красная Чувашия» колхозсенче бригадирсем суха тăвакансене тивĕçлĕ пулăшу параççĕ. Кунпа пĕрлех кулленхи ĕç нормине кăм мĕн чул тултарса пынине кăтарту хăми çине çырса тăрассĕ. Çапла туни колхозниксен ĕçлес кăмăлне ӳстерет.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, районра çĕртме тăвас ĕç çителĕксĕр пырать-ха. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕртме сухине пурĕ те 1740 гектар çеç сухаланă. Уйăмах Утаçкасси, Кĕчкей тата Хуракасси ял Советĕнчи колхозсем юлса пыраççĕ. Вĕсем плана 10—12 процент çеç тултарнă. «Победа», Водопьянов ячĕпе тăракан колхозсем çĕртме тума та тытăнман. Машинно-тракторнăй станци колхозсенче çĕртме тăвас ĕçе чăтма çук япăх йĕркеленĕ. МТС директорĕ В. Желтухин юлташ ĕçре улшăну тăвассишĕн нимĕн те тăрăшмасть.

Н. АНДРЕЕВ.

КУНТА ХĂСАН КИНО ПУЛĔ-ШИ?

КАЛИНИНО. Уйăкасри «Комсомолец» колхоза 4 çул ытла ĕнтĕ кино таврашĕ пырса курман. Кун çинчен райсовет исполкомĕ те лайăх пĕлет, анчах вăл кусса çӳрекен киносен ĕçне лайăхлатас тесе, нимĕнле мера та йышăнмасть. Кино работникĕсем те, колхоз район центрĕнчен инçе тесе, унта пыма тăрăшмассĕ. «Комсомолец» колхоз членĕсем кино кăтартма ыйтаççĕ.

Н. БАШКИРОВ,
Комсомолăн пуçламăш организаци секретарĕ.

Совет çĕршывĕ тăрăх

«ПĔТĔМ СОЮЗРИ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕН ПАРАЧĔ» ЯТЛĂ ДОКУМЕНТЛĂ ТĔРЛĔ ТĔСЛĔ ФИЛЬМ

Октябрĕн 8-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинематографи комитетĕнче «Пĕтĕм Союзри физкультурниксен парачĕ» ятлă документлă тĕрлĕ тĕслĕ çĕнĕ фильма пăхса тухнă. Парада 25 чи лайăх кинооператор ӳкернĕ, режиссерсем — И. Венжер тата Сталинла преми лауреачĕсем В. Беляевпа И. Лосельский, звукооператорсем—И. Гунгер, В. Котов тата Р. Нестеров, текстне В. Агатов çырнă.

Çав фильма столицăри икĕ пысăк кинотеатрта—«Метрополь» тата «Художествăллă театрта» кăтартма тытăнчă. Ситес кунсенче ăна пирĕн çĕршыври киносенче кăтартма пуçласçĕ. (ТАСС).

УРАЛТИ ПУЯНЛĂХ

Кăçал Уралта геологи тĕлĕшпе разведка тăвакан 70 партипе экспедицине яхăн ĕçленĕ. Вишера шывĕ хĕрринче геологипе минералоги наукисен докторĕ Иванов юлташ ертсе пыракан экспедици тайга бассейнне тĕпчесе вĕреннĕ. Издель районĕнче марганец руди нумай выртакан вырăн тупнă.

Вăтам Уралăн хĕвелтухăç айккинче çĕркăмрăкĕ выртакан вырăн тупнă. Кăнтăр Уралăн çеçенхирĕсенче тимĕр руди нумай выртакан вырăн тупнă. Çав вырăн Магнитогорскри комбинат валли тимĕр руди парса тăрĕ.

Уралта Пушкăрт республикин чиккинче тимĕр руди выртакан вырăн тупнă.

Тимĕр руди районне Уралта пуçласа самолетсем çинчен аэромагнит йĕркипе ӳкерсе ӳкере илнĕ. (ТАСС).

Ӳкерчĕк çинче: полярти Диксон утравĕ çинчи шкулăн 1-мĕш класĕнче **Е. М. Контамирова** учительница вĕрентет. Çав шкула Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче уснă.

А. ГОНЧАРОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ПĔТĔМ РОССИЙĂРИ ХАЛĂХ ТАШШИСЕН СМОТРЕ

Ситес кунсенче Пĕтĕм Российăри халăх ташшисен коллективĕсен смотрĕ пуçланать. Ăна РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство Управленийĕ организацилет. Халăх ташшисене Свердловскра, Горькире тата Дон çинчи Ростовра пăхса тухаççĕ. Çав хуласене ташă коллективĕсем 22 хуларан пухăнаççĕ. Пĕтĕмпе 100 ташша пăхса тухмалла.

Чи лайăх коллективсем вара халăх ташшисене кăтартма Мускава каяççĕ. (ТАСС).

ÇĔНТЕРӲ ТĂВĔ

Совет альпинисчĕсен темиçе ушкăнĕ нумаях пулмасть Тянь-Шань тăвăсем çине, 6.995 метр çӳллĕш çав тери чапла, Хан-Тенгри ятлă пит тавра ларакан тусем çине хăпарнă.

Çав вырăнтан кăнтăртарахра вĕсем 7.439 метр çӳллĕш ту курнă. Çав ту Совет Союзĕнче чи çӳллĕ иккĕмĕш ту пулса тăрать, чи çӳллĕ пĕрремĕш ту —Памир çинчи Сталин тăвĕ. Çав халь тунă тăва альпинистсем Çĕнтерӳ тăвĕ тесе ят панă. Ун çине вĕсем сурçĕр, хĕвеланăç тата кăнтăр енчен хăпарса кайнă. Совет Союзĕн географи карти çинче, çапла ĕнтĕ, тата тепĕр «шурă пăнчă» лекнĕ пек пулчĕ. (ТАСС)

ТĂВАН ÇĔРШЫВА ТАВРАННИ

Хĕрлĕ Çар нимĕç пусмăрлăхĕнчен ирĕке кăларнă совет гражданĕсем Белоруссири хуласемпе ялсене тавраннаççĕ. 150 пин çын ытла тавраннă ĕнтĕ. Çул çинче вĕсене пулăшу параççĕ. Пысăк чугун çул станцийĕсенче вĕсене апат-çимĕç параççĕ, кирлĕ пулсан, тумтирпе атă-пушмак та параççĕ. Тăлăх юлнă ачасене хăйне уйăм ача çурчĕсене яраççĕ.

Хăйсен тăван хулисемпе ялĕсене тавраннă çынсене çийĕнчех ĕçе вырнаçтараççĕ. (ТАСС).

САРАТОВРИ КĔЛЕНЧЕ КОМБИНАЧĔ

Саратовра пысăк кĕленче комбиначĕ тума пуçланă. Вăл чӳрече кĕленчипе куçкĕски кĕленчи, химипе лаборатори валли савăт-сапа тата кĕленче шăратакан кăмакасем валли çунман кирпĕч туса хатĕрлет. Килес çул çав комбинат ĕçлеме пуçлать. Çулталăк хушшинче вăл 3 миллион тăваткăл метр чӳрече кĕленчи туса хатĕрлемелле. (ТАСС).

СОЧИ ВАЛЛИ ЭНЕРГОПОЕЗД

ССР Союзĕн электростанцисен наркомачĕ Сочи хулине иккĕмĕш энергопоезд янă. Унăн хăвачĕ—3.000 киловатт. Поезд вунă вагонран тăрать, вĕсен шутне турбогенератор, икĕ хуран, сивĕткелли оборудовани кĕреççĕ. Çав поезд Сочи—Мацеста таврашĕнчи санаторисемпе курортсене, çавăн пекех тата тинĕс çыранне çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлекен строительство участокĕсене электроэнерги парса тăрать. (ТАСС)

И. В. Сталин „Финляндипе Совет Союзĕ“ ятлă обществăн делегацине йышăнни

Октябрĕн 8-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Генералиссимус И. В. Сталин «Финляндипе Совет Союзĕ» ятлă обществăн делегацине йышăннă. Делегацире çаксем пур: общество председателĕ сутĕç министрĕ И. Хэло господин, Л. Хэло госпожа, общество вице-председателĕ М. Рюзмя господин, Х. Вуолийоки госпожа, Г. Куусинен, Л. Вильянен, Г. Хьелман, В. Песси, Э. Калима, Л. Суомела господин, Ф. Юлияне госпожа тата З. Сааристо господин.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тата ВОКС правленийĕн председателĕн ĕçĕсене туса тăракан А. В. Караганов пулнă.

Эпĕ суйлавçăсем хушшинче мĕнле ĕçлетĕп

Эпĕ хамăн кулленхи ĕçре Сталин юлташăн депутатсем пирки калана сăмахĕсене яланах асра тытса пыратăп.

Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче тухса калани пирĕн умма çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Вăл вăхăтра пирĕн задача—тыла çирĕплетесси пулса тăчĕ.

Эпĕ ун чухне паровоз юсакан заводра механически цехăн начальникĕ пулса ĕçлеттĕм. Квалификацилле рабочисем чылайăшĕ фронта тухса кайнă пирки ĕçре пысăк йывăрлăхсем килсе тухрĕç. Çавна пула, ĕçлекенсене çĕнĕрен хатĕрлемелле пулчĕ. Цех коллективĕ çак задачăна ăнăçлăн пурнăçларĕ. Рабочисен йышĕнче пуринчен ытла хĕрарăмсемпе ачасем ĕçлетчĕç. Çапла пулин те, цех коллективĕ продукци туса кăларассине вăрçă вăхăтĕнче 3 хутчен ӳстерчĕ. Çакăнпа пĕрлех цех коллективĕ транспорта кирлĕ çĕнĕ продукцисем кăларма хăнăхрĕ. Сăмахран: «Кинг уникисене», çĕнĕ инжекторсене, дышлăсене тата паровоз кăмакин решеткисене тума тытăнтăмăр. Эпир хальхи вăхăтра та вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхсене чакармасăр ĕçлетпĕр.

Производствăри пур ыйтусене те производство канашлăвĕсенче сӳтсе-явăтпăр.

Цех коллективĕ социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Кашни рабочи ăмăртура мала тухассинĕн кĕрешет. Коллектив уйăхран уйăх ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартса пырать. 1944-мĕш çулта цех коллективĕ 6 уйăх хушши пĕр чарăнмасăр заводри кусса сӳрекен Хĕрлĕ Ялава алăра тытса тăчĕ.

1944-мĕш çулхи ĕç итогĕсене пăхса тухнă хыççăн, манăн цех завоцри цехсен социализмлă ăмăртăвĕнче 2-мĕш вырăн йышăнчĕ. Кăçалхи çул та цех коллективĕ çак çитĕнӳсене çирĕплетсе, татах та пысăк ĕçсем тума сăмах пачĕ. Ку сăмаха вăл чыслăн пурнăçласа пырать.

Халĕ эпĕ заводра тухакан хаçатăн ответлă редакторĕнче ĕçлетĕп. Ман пата кашни кунах суйлавçăсем пырса сӳреççĕ е сырусем сыраççĕ. Уйрăмăнах çак çулсенче Хĕрлĕ Çар семьисене пулăшас тĕлĕшпе ытларах ĕçлеме тиврĕ.

Суйлавçăсен пур ыйтăвĕсене те эпĕ вăхăтра ответ паратăп. Нумаях пулмасть Шестаков, Орлинская, Мельникова, Комаров, Фролова тата ытти суйлавçăсен ĕçĕсемпе ыйтăвĕсене татса патăмăр. Вĕсем хăйсем те куншăн хула Советне чĕререн тав тăваççĕ.

Час-часах суйлавçăсем ман пата хваттер ыйтăвĕсемпе пулăшу ыйтма пыраççĕ. Анчах та коммунальнăй суртйĕрсем енчен Улатăр хули çав тери пысăк чăрмавсем курать.

Çавăнпа хула Совечĕн ку тĕлĕшпе Чăваш АССР Совнаркомĕ умĕнче ыйту лартмалла. Ку ыйтăва вăраха тăсма юрамасть. Мĕншĕн тесен ĕççыннисен пурнăç условисене лайăхлатас ĕçре коммунальнăй суртйĕрсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Депутат ĕçĕ—пысăк та ответлă ĕç. Анчах та ĕççыннисен кашни ыйтăвне вăхăтра татса парасси—депутатăн чи малтанхи тивĕçĕ пулса тăрать.

Т. МОИСЕЕВА,
СССР Верховный Совет депутачĕ.

Тăван çĕршывăн вăй-хăватне ӳстерер

Çĕнтерӳ салючĕсем кĕрлесе чарăннă хыççăн, пирĕн çĕршывра каллех савăнăçлă кунсем пуçланчĕç. Халĕ совет ĕççынисем умĕнче немĕç захватчикĕсен сураланă хуçалăха кĕске вăхăтрах юсаса ура çине тăратас, Тăван çĕршывăн вăй-хăватне татах та ӳстерес задача тăрать.

Паллах, çак ĕçсене пурнăçланă çĕрте халăхăн шанчăклă ывăлĕсем—Верховный Советна вырăнти Советсен депутачĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Сталин юлташ Мускав хулинчи суйлавçăсен пухăвĕнче çапла калаçă: депутатсем вĕсем халăхăн шанчăклă тарçисем пулса тăраççĕ, вĕсен халăх ĕçне туса пымалла, государствăн вăй-хăватне ӳстерсе пыраççишĕн ĕçлемелле,—тенĕ.

Халĕ, вăрçă чарăннă хыççăн çĕршыв мирлĕ пурнăçа куçнă тапхăрта, пирĕн, депутатсен, çĕршыв вăй-хăватне ӳстересшĕн татах та ытларах ĕçлемелле. Хамăрăн суйлавçăсемпе таччăнрах сыхăнса вырăнти Советсемпе колхозсен ĕçĕсене кулленех çирĕплетсе пымалла.

Чăваш АССР Верховный Совет суйлавĕсем пулса иртнĕренне эпĕ яланах Хĕрлĕ Чутай районĕн Штанаш округĕнчи суйлавçăсемпе сыхăнса ĕçлерĕм. Районри колхозсене туха çӳресе, суйлавçăсем хушшинче хуçалăхпа политика ыйтăвĕсем тăрăх тĕрлĕ калаçусемпе докладсем ирттертĕм, вĕсене Чăваш АССР Верховный Совет сессийĕсен решенийĕсемпе тата СССР Верховный Совет Президиумĕн указĕсемпе паллаштарса тăтăм. Кунсăр пуçне, хамăн суйлавçăсемпе çыруçем урлă та тачă сыхăну тытса тăтăм. Хăшпĕр чухне кунсерен 10—15 çыру илеттĕм. Эпĕ пур ыйтусене те сийĕнчех татса пама тăрăшатăп. «Правда» колхоз пĕр çулта вылăх апачĕ тата акмалли вăрлăх ситменнине антăраса ӳкрĕ. Эпĕ вĕсене вăрлăх тупма пулăшрăм.

Элĕк районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсене промартель уçма пулăшрăм. Хоршеваш, Штанаш тата ытти ял Совечĕсенчи колхозниксене налогсемпе государство умĕнчи парăмсем тăрăх льгота илме пулăшрăм.

Чĕрбайри, Хозанкинри тата «Красный партизан» колхозсен членĕсем мана хăйсен колхоз председательĕсем ĕçке ярăнса колхоз тырпулне тата ытти продуктсене салатса яма пуçлани çинчен сырса пĕлтерчĕç. Куп пирки çийĕнчех сӳтсе-явса кирлĕ мерăсем йышăнтăмăр.

Эпĕ уйрăмăнах колхозсен тата вырăнти промышленность предприятисен ĕçĕсене асăрхаса ĕçре пулăшса пыратăп. Çавăн пекех суйлавçăсене те тĕрлĕ ĕçсенче вăхăтра пулăшу парса тăратăп.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фронта тухса кайнă пирки манăн хамăн суйлавçăсенчен вăхăтлăха уйăрăлма тиврĕ. Анчах та хамăн шухăш-кăмăлсемпе эпĕ яланах суйлавçăсемпе пĕрлеччĕ.

Эпĕ фашистла сынçиенсене хирĕç пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешрĕм. Хам ертсе пыракан батальонри красноармеецсене Тăван çĕршыва тата партине правительствăна чун-чĕререн парăнса, тăшмана хирĕç паттăрлăн кĕрешме вĕрентсе пытăм.

Манăн батальон приказ ячĕ пулсан, вăл яланах малти ретре пыратчĕ. Уйрăмăнах манăн воинсем хăйсен паттăр ĕçĕсене Карпат сăрчĕсем çинчи нимĕçсен укрепленийĕсем çине наступлени тунă вăхăтра лайăх кăтартса пачĕç.

Манăн фронтри ĕçе партипе правительство пысăка хурса хакласа мана Александр Невский орденĕ панĕç. Фронтра аманнă хыççăн мана тылра ĕçлеме хăварчĕç. Акă, эпĕ халĕ каллех депутат ĕçĕсене тума тытăнтăм. Эпĕ Улатăр районĕнче Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕн ĕçĕсене тăватăп. Çак вăхăтра эпĕ районри чылай колхозсенче пулса, колхоз пухăвĕсенче калаçусемпе докладсем ирттертĕм, вылăх-чĕрлĕх фермисен, шкулсен, ял Совечĕсен ĕçĕсенче пулăшса пытăм.

Эпĕ хамăн суйлавçăсемпе яланах тачăн сыхăнса ĕçлеме тăрăшатăп. Мĕншĕн тесен эпĕ—халăхăн тарçи.

А. ТОЛСТОВ,
ЧАССР Верховный Совет депутачĕ.

Государствăна йĕтĕн-кантăр памалли плана хăвăртрах тултарассишĕн

Йĕтĕне пултарма сарас тата кантăра шыва хутас вăхăт иртсе пырать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ йĕтĕн-кантăра татса майлас тĕлĕшпе районсене сирĕп кăтартусем пачĕç. Анчах та уйрăм районсенче халĕ те йĕтĕн тата кантăр татса пĕтермен колхозсене тĕл пулма пулать-ха. Йĕпреç районĕнчи «Победа», «Заря», «Эконом», Карл Маркс ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те йĕтĕн татса пĕтермен. Çак колхозсен руководителĕсем çавăнăçусăрринче пула, ăнса пулнă йĕтĕн сая каять. Пăрачкав районĕнчи «Красная заря», «За родину» колхозсем тата Кувакино районĕнчи чылай колхозсем те йĕтĕн татса пĕтермен.

Иртнĕ çул йĕтĕне вăхăтра татса пуçтарманнине пула, Йĕпреç районĕнчи «Канаш», «Смычка», «Эконом» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем татнă йĕтĕне те хĕлле çĕртсе ячĕç тата йĕтĕн-кантăр продукцине государствăна парса татаймарĕç.

Кантăр татса майласси те хăшпĕр районсенче сителĕкĕр пырать. Нумай колхозсене касал кантăр лайăх çитĕнчĕ. Анчах та уйрăм колхозсенче татса пуçтарман кантăр лантăкĕсене халĕ те курма пулать. Канаш, Шăхасан, Чкаловски, Вармар тата ытти районсенчи хăшпĕр колхозсем кантăра вăхăтра татса майламаннине пула, сӳс-кантăр тата вĕсен варрине парас тĕлĕшпе çулран-çулах государствăна парăма кĕрсе пыраççĕ. Канаш районĕнчи «Комбайн», Каганович, Чапаев, Куйбышев ячĕсемпе тăракан колхозсем юлашки 2—3 çул хушшинче государствăна пĕр килограмм та сӳс паман. Çав вăхăтрах асăннă колхозсем чи лайăх çĕр çине кантăр акнă, лайăх туханăлă кантăр туса илнĕ. Татса çапнă кантăра вăхăтра шыва хутайманнине пула вĕсем ăна çĕртсе сая янă. Сĕнтĕр районĕнчи «Краснофлотец», «Осоавиахим», «Идея», «Смычка», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем те кашни çулах пысăк туханăлă кантăр туса илеççĕ. Çак колхозсем те вара кантăр çурăмне итемсенче е ытти вырăнсенче купарах çĕртсе пĕтереççĕ. Çав вăхăтрах государствăна сӳс вырăнне тырă параççĕ. Паллах, сӳс вырăнне тырă пани колхоза та сиенлĕ, вăл колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх валеçмелли тырă хисепне сахаллатать. 1944 çулта кăна Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем сӳс вырăнне 2.730 пат, Элĕк районĕнчи колхозсем 2.880 пат, Етĕрне районĕнчи колхозсем 2.580 пат, Улатăр районĕнчи колхозсем 2.440 пат тырă панă. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенчи колхозсенче те нумай. Асăннă районсенчи колхозсем хăйсем акса тăвакан йĕтĕн-кантăра вăхăтра пухса çапнă пулсан тата шыва хутса майланă пулсан, государствăна сӳс-кантăр памалли обязательствăна тултарнă хыççăн планран ирттерсе панăшăн государствăран пиншер пат тырă илме пултаратчĕç. Кантăрпа йĕтене татса çапни кăна сахал. Ана кашни колхозрах вăхăтра шыва хутмалла. Çапла туни